27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ЯНВАРЬ
19
ЭРНЕКУН
12(6763) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 1-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне ЖУКОВА

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-полковника МАЛИНИНА

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, ВАРШАВАРАН ҫавтери хӑвӑрт хӗвеланӑҫнелле иртсе кайса, ЖИРАРДУВ хулине йышӑннӑ, СОХАЧЕВ хулинелле каякан ҫулсене татнӑ, ВАРШАВАРАН ҫурҫӗртерехре ВИСЛА шывӗ урлӑ каҫса кайнӑ та, ҫапла вара, ВАРШАВАНА хӗвеланӑҫ енчен татса илсе, паян, январӗн 17-мӗшӗнче, ҫурҫӗр енчен, хӗвеланӑҫ енчен тата кӑнтӑр енчен пӗр харӑс пырса ҫапса, пирӗнпе союзлӑ Польшӑн столицине ВАРШАВА хулине—нимӗҫсен ВИСЛА шывӗ ҫинчи оборонин чи паха стратегиллӗ узелне—туртса илнӗ.

ВАРШАВА хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ҫаксем чапа тухнӑ: ПЕРХОРОВИЧ генерал-майорӑн, БЕЛОВ генерал-полковникӑн, поляксен ПОПЛАВСКИЙ генерал-лейтенант ертсе пыракан 1-мӗш Армийӗн. ЛУКЬЯНЧЕНКО генерал-лейтенантӑн, СТРАЖЕВСКИЙ генерал-майорӑн, ПУЛКО-ДМИТРИЕВ генерал-лейтенантӑн, АНДРЕЕВ генерал-майорӑн. АНАШКИН генерал-майорӑн. ПОЗНЯК генерал-майорӑн, ЧЕРНОВ генерал-майорӑн, ВЫДРИГАН полковникӑн, ЗАЙКИН генерал-майорӑн. СОЛОВЬЕВ полковникӑн, ПАВЛОВСКИЙ полковникӑн, МУЗЫКИН полковникӑн. РОТКЕВИЧ генерал-майорӑн, ШЕЙПАК полковникӑн, БЕРЗЮК генерал-майорӑн, ЗАЙКОВСКИЙ полковникӑн. КЕНЕВИЧ генерал-майорӑн, РАДЗИВАНОВИЧ полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн ГОДИНАН, артиллери генерал-майорӗн МОДЗЕЛЕВСКИН, артиллери генерал-майорӗн ПЛАСКОВАН. БЛАНСКИЙ полковникӑн, ВИКЕНТЬЕВ полковникӑн. СКОКОВСКИЙ полковникӑн, БЕЛИХОВСКИЙ полковникӑн. КЕРП полковникӑн, ПРОКОПОВИЧ полковникӑн, ГРЕХОВ полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн ЛЯРСКИН, КОЛОКОЛЕВ полковникӑн. БЕЛОВАТСКИЙ полковникӑн, ЮРГЕЛЕВИЧ полковникӑн. ВАСИЩЕВ полковникӑн, МУХАЧЕВ подполковникӑн, ПОПОВИЧ майорӑн, ВАСИЛЬЧЕВ подполковникӑн, МИХАЙЛОВСКИЙ подполковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн БОГДАНОВАН, РАДЗИЕВСКИЙ генерал-лейтенантӑн. танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ВЕДЕНЕЕВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ТЕЛЯКОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн КРИВОШЕИНАН танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн КРЕТОВАН, БЕЛОБОРОДОВ подполковникӑн, КОРОСТИЙ подполковникӑн, ЕРЕМЕЕВ полковникӑн, МАЛЮТИН полковникӑн, ЦУРЫЧКИН подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн РУДЕНКАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн БРАЙКОН, авиаци генерал-лейтенанчӗн САВИЦКИН, авиаци генерал-майорӗн КАРАВАЦКИН, авиаци генерал-майорӗн ДЗУСОВАН, авиаци генерал-майорӗн ТОКАРЕВАН. ТИМОФЕЕВ полковникӑн. БЕЛОУСОВ полковникӑн, СУХОРЯБОВ полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн КОМАРОВАН. РАССКАЗОВ полковникӑн, НАКОНЕЧНИКОВ подполковникӑн. СИТКИН полковникӑн, БУЗЫЛЕВ полковникӑн, БЕРКЕЛЬ полковникӑн, ИВАНОВ полковникӑн. РОМЕЙКО полковникӑн, ШЕРСТЮК подполковникӑн, ГАВРИЛЬЧЕНКО подполковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн КОМАРОВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ВОРДЗИЛОВСКИН, БЕЛЬСКИЙ полковникӑн, КИСЕЛЕВ полковникӑн, ЛЮБАНСКИЙ полковникӑн, ПУЗЕРЕЦКИЙ полковникӑн, ХОВРАТОВИЧ подполковникӑн саперӗсем: СОЛОВЬЕВ полковникӑн, СУЧЕК полковникӑн, ЗАРУДСКИЙ полковникӑн, СМОЛИЙ полковникӑн, ВАКИШ подполковникӑн, СТУПАЧЕНКО подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ячанлӑха палӑртса хӑварас тесе, ВАРШАВА хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ВАРШАВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 17-мӗшӗнче, 19 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, виҫҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, вӑл шутрах поляксен 1-мӗш Арми ҫарӗсене, Польша столицине ВАРШАВА хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, вӑл шутрах поляксен 1-мӗш Армин ҫарӗсене, ВАРШАВА хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн тата пирӗнпе союзлӑ Польшӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 17-мӗшӗ.
№ 223.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА

Фронт штабӗн начальникне

Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, ӑнӑҫлӑ наступлени вӑйлатса пырса, паян, январӗн 17-мӗшӗнче, ҫулсен паха узелӗсем тата нимӗҫсен оборонин тӗреклетнӗ пункчӗсем пулса тӑракан ПШЕДБУЖ тата РАДОМСКО хулисене туртса илнӗ те, ВАРТА шывӗ урлӑ каҫса кайса, танковӑй соединенисемпе пехота ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапнипе, нимӗҫсен ВАРТА шывӗ ҫинчи оборонин паха узелне ЧЕНСТОХОВА хулине йышӑннӑ.

ЧЕНСТОХОВА, ПШЕДБУЖ тата РАДОМСКО хулисене туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ҫаксем чапа тухнӑ: ЖАДОВ генерал-полковникӑн, КОРОТЕЕВ генерал-полковникӑн, ЛЯМИН генерал-майорӑн, КОЛОМИНОВ генерал-майорӑн, РОДИМЦЕВ генерал-лейтенантӑн. ЛЕБЕДЕНКО генерал-лейтенантӑн, БАКЛАНОВ генерал-майорӑн, МАРТИРОСЯН генерал-майорӑн, АКИМОВ генерал-лейтенантӑн. ПУТЕЙКО генерал-майорӑн, ЖУКОВ генерал-майорӑн, КОМАРОВ полковникӑн. ПЕРЕПЕЛИЦА полковникӑн, ХИЛЬЧЕВСКИЙ полковникӑн ҫарӗсем; РЫБАЛКО генерал-полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн БАХМЕТЬЕВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ЧУПРЫГИНАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн НОВИКОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ИВАНОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн СУХОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн КУЗНЕЦОВАН, ЧУГУНКОВ полковникӑн, АРХИПОВ полковникӑн, СУХОВАРОВ полковникӑн танкисчӗсем; артиллери генерал-майорӗн ОГАНЕСЯНАН, артиллери генерал-майорӗн, ПОЛУЭКТОВАН, артиллери генерал-майорӗн ФАУСТОВАН артиллерисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-майорӗн ПРСНИНАН. авиаци генерал-майорӗн ГОРЛАЧЕНКАН, МАЧИН полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн ПОЛБИНАН, авиаци генерал-майорӗн ДЕМИДОВАН, КОЖЕМЯКИН полковникӑн, ПОКРЫШКИН полковникӑн, авиаци генерал-лейтенанчӗн РЯЗАНОВАН, авиаци генерал-майорӗн АРХАНГЕЛЬСКИН, авиаци генерал-лейтенанчӗн УТИНАН, авиаци генерал-майорӗн БАРАНЧУКАН, ДОНЧЕНКО подполковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ГАЛИЦКИН, КАМЕНЧУК полковникӑн. ПОДОЛЫННЫЙ полковникӑн, ЕФРЕМЕНКО полковникӑн, СОЛДАТЕНКО полковникӑн, ГЛЕЗЕР полковникӑн саперӗсем; сыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БУЛЫЧЕВАН, БОРИСОВ полковникӑн, БОГОМОЛОВ полковникӑн, государство хӑрушсӑрлӑх подполковникӗн ГРИБАН связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ячанлӑха палӑртса хӑварас тесе, ЧЕНСТОХОВА, ПШЕДБУЖ тата РАДОМСКО хулисене туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ЧЕНСТОХОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 17-мӗшӗнче, 23 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ЧЕНСТОХОВА, ПШЕДБУЖ тата РАДОМСКО хулисене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ЧЕНСТОХОВА, ПШЕДБУЖ тата РАДОМСКО хулисене ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 17-мӗшӗ.
№ 225.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-лейтенанта БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем январӗн 14-мӗшӗнче ВАРШАВАРАН ҫурҫӗртерехре НАРЕВ шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринчи икӗ плацдармран наступлени пуҫласа янӑ та, артиллери хӑватлӑн пулӑшнипе, тӑшманӑн вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ, шалалла инҫете каякан оборонине татнӑ.

Тӑватӑ кун хушши пынӑ ҫапӑҫусенче, нимӗҫсем хытӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, икӗ плацдармран наступлени туса пыракан фронт ҫарӗсем пӗрлешнӗ те 40 километр таран малалла кайнӑ, татса кӗнӗ вырӑна фронт тӑршшӗпе 100 километр таран аслӑлатнӑ.

Наступлени туса пырса, пирӗн ҫарсем нимӗҫсен оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене—МАКУВ. ПУЛТУССК, ЦЕХАНУВ, НОВЕ-МЯСТО, НАСЕЛЬСК хулисене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 500 пункта ытла йышӑннӑ.

Нимӗҫсен оборонине татассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ҫаксем чапа тухнӑ: ГОРБАТОВ генерал-полковникӑн, ГУСЕВ генерал-лейтенантӑн, ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-полковникӑн. БАТОВ генерал-полковникӑн, ПОПОВ генерал-полковникӑн, ИВАШЕЧКИН генерал-лейтенантӑн, ГЛЕБОВ генерал-лейтенантӑн, КОКОРЕВ генерал-лейтенантӑн, БОБКОВ генерал-лейтенантӑн, ЛЯПИН генерал-лейтенантӑн. КУЗНЕЦОВ генерал-лейтенантӑн, УРБАНОВИЧ генерал-лейтенантӑн, НИКИТИН генерал-майорӑн, ФОКАНОВ генерал-лейтенантӑн ГАРЦЕВ генерал-майорӑн, КОЛГАНОВ генерал-лейтенантӑн, АНИСИМОВ генерал-лейтенантӑн, ПОЛЕНОВ генерал-лейтенантӑн, ЧУВАКОВ генерал-майорӑн, ЭРАСТОВ генерал-лейтенантӑн, АЛЕКСЕЕВ генерал-лейтенантӑн, ЧАНЫШЕВ генерал-лейтенантӑн. ПАЧКОВ полковникӑн. ВЕРЕВКИН генерал-майорӑн, КРИВЕНЦОВ полковникӑн, ТЕЛКОВ полковникӑн, АБИЛОВ полковникӑн, ГРЕКОВ полковникӑн. ПАШКОВ полковникӑн. ГРИГОРЬЯН полковникӑн. БУЛАТОВ генерал-майорӑн, ОПЯКИН генерал-майорӑн, ЦЫПЛЕНКОВ полковникӑн, КАЗАКЕВИЧ генерал-майорӑн, ЛЯШЕНКО генерал-майорӑн, БОРЩЕВ генерал-майорӑн, СОННИКОВ полковникӑн, ЯКУШЕВ генерал-майорӗн, РАДЫГИН генерал-майорӑн, МАКАРОВ генерал-майорӑн, ГРЕБЕННИК генерал-майорӑн, ВОЛКОВ полковникӑн, ТЕРЕМОВ генерал-майорӑн, ДЖАНДЖГАВА генерал-майорӑн, БОРИСОВ генерал-майорӑн, КАРПЕЛЮК полковникӑн, АБДУЛЛАЕВ полковникӑн, КАЛАДЗЕ полковникӑн, ТРУДОЛЮБОВ полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ДЕГТЯРЕВАН, артиллери генерал-майорӗн ВЛАДИМИРОВАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ТИМОТИЕВИЧАН, артиллери генерал-майорӗн КАЗАКОВАН, артиллери генерал-майорӗн ДМИТРИЕВАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн БЕСКИНАН, артиллери генерал-майорӗн ПЯДУСОВАН, артиллери генерал-майорӗн ЛИХАЧЕВАН артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ЮДИНАН, ОПАРИН полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн НОСОВАН, МИРОНОВИЧ полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн НОВАКАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ФИРСОВИЧАН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ПОПОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ПАНОВАН, КОЗИКОВ полковникӑн танкисчӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн БЛАГОСЛАВОВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ЖИЛИНАН, ИСУПОВ полковникӑн, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ШВЫДКОЙАН, ЦВАНГЕР полковникӑн. инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ВИТВИНИНАН, ВИЗИРОВ полковникӑн саперӗсем; сыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн БОРЗОВАН, сыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн МИШИНАН, сыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн МАМОТКАН, БОРИСОВ полковникӑн, ПРОЦЕРОВ подполковникӑн, ХОМЯКОВ полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ячанлӑха палӑртса хӑварас тесе, нимӗҫсен оборонине татассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 17-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, нимӗҫсен оборонине татнӑскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, нимӗҫсен оборонине татассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 17-мӗшӗ.
№ 224.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-лейтенанта БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла наступлени туса пырса, паян, январӗн 18-мӗшӗнче, ПШАСНЫШ (ПРАСНЫШ) хулине тата МОДЛИН (НОВОГЕОРГИЕВСК) хулине крепоҫне—ҫулйӗрсен паха узелӗсене тата нимӗҫсен оборонин тӗреклетнӗ пункчӗсене — штурмласа туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти пин пункта ытла йышӑннӑ.

ПШАСНЫШ тата МОДЛИН хулисене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ГУСЕВ генерал-лейтенантӑн, ПОПОВ генерал-полковникӑн, ГЛЕБОВ генерал-лейтенантӑн, ЛЯПИН генерал-лейтенантӑн, ФОКАНОВ генерал-лейтенантӑн, ГАРЦЕВ генерал-майорӑн, ЧАНЫШЕВ генерал-лейтенантӑн, ПАШКОВ полковникӑн, ГРИГОРЬЯН полковникӑн, БУЛАТОВ генерал-майорӑн, ОПЯКИН генерал-майорӑн, БЕЛЯЕВ полковникӑн, ТРУДОЛЮБОВ полковникӑн. МУРАТОВ полковникӑн, КАЛАДЗЕ полковникӑн, КАРПЕЛЮК полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн СОКОЛЬСКИЙӖН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ТИМОТИЕВИЧАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн БЕСКИНАН, артиллери генерал-майорӗн КОРОЧКИНАН, артиллери генерал-майорӗн ГАНЖЕ. МЕРЛИН полковникӑн, БАРМОТИН полковникӑн, ТРАВКИН полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ФИРСОВИЧАН, ЛОМАКО полковникӑн, МИРОНЕНКО полковникӑн, ЮРЕВИЧ полковникӑн, КОЗИКОВ полковникӑн, ГОЛИК подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ВЕРШИНИНАН, авиаци генерал-майорӗн АЛЕКСЕЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ОСИПЕНКАН, авиаци генерал-майорӗн БОРИСЕНКАН, авиаци генерал-майорӗн ГЕТЬМАНАН. ПОКАЕВОЙ полковникӑн, ВОЛКОВ полковникӑн, ВУСС полковникӑн, СМОЛОВИК полковникӑн, КАЛУГИН полковникӑн, ТИХОМИРОВ полковникӑн. ВИНОГРАДОВ полковникӑн, ГРИШЕНКО полковникӑн. КАЗАЧЕНКО подполковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн БЛАГОСЛАВОВАН, ДОБЫЧИН полковникӑн, ПЕТРОВ полковникӑн, ВОРОНОВ майорӑн саперӗсем; сыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн БОРЗОВАН, сыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн МАМОТКОН, ТИМОШЕНКО полковникӑн, ЛЕБЕДЕВ подполковникӑн, МИХАЙЛОВ полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ячанлӑха палӑртса хӑварас тесе, ПШАСНЫШ тата МОДЛИН хулисене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «НОВОГЕОРГИЕВСКИ» тата «ПРАСНЫШСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 18-мӗшӗнче, 20 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ПШАСНЫШ хулипе МОДЛИН крепоҫне туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ПШАСНЫШ тата МОДЛИН хулисене ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 18-мӗшӗ.
№ 226.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА

Фронт штабӗн начальникне

Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, танковӑй соединенисемпе пехота хӑвӑрт пырса ҫапса атакӑлана хыҫҫӑн, паян, январӗн 18-мӗшӗнче, ПИОТРКУВ (ПЕТРОКОВ) хулине чугун ҫул станцине—ҫулйӗрсен паха узелне тата нимӗҫсен ЛОДЗЬ енчи оборонин тӗреклетнӗ пунктне—туртса илнӗ.

ПИОТРКУВ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ПУХОВ генерал-полковникӑн, МАЛАНДИН генерал-лейтенантӑн, ПУЗИКОВ генерал-майорӑн, ЧЕРВОНИЙ генерал-майорӑн. ВОЛКОВИЧ полковникӑн ҫарӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн НОВИКОВАН. ЛЕЛЮШЕНКО генерал-полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн УПМАНАН. ОРЛОВ полковникӑн, РЫВЖ полковникӑн, МАРЯХИН полковникӑн, ТУРКИН полковникӑн, ДЕМЕНТЬЕВ майорӑн. КУРИСТ подполковникӑн танкисчӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн СЕМЕНОВАН, артиллери генерал-майорӗн МЕНТЮКОВАН артиллери генерал-лейтенанчӗн КУБЕЕВАН. КОЗУБЕНКО полковникӑн артиллерисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн КРАСОВСКИЙӖН, авиаци генерал-майорӗн ПРОНИНАН, авиаци генерал-майорӗн СЛЮСАРЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн БЛАГОВЕЩЕНСКИЙӖН, авиаци генерал-майорӗн КУРОЧКИНАН, авиаци генерал-майорӗн ЗАБАЛУЕВАН, КОЛОМЕЙЦЕВ полковникӑн, СЕМЕНОВ подполковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ГАЛИЦКИЙӖН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ВАРВАРКИНАН, ПОЛУЭКТОВ полковникӑн саперӗсем; сыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БУЛЫЧЕВАН, сыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн АХРЕМЕНКАН, ОСТРЕНКО полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ячанлӑха палӑртса хӑварас тесе, ПИОТРКУВ (ПЕТРОКОВ) хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ПЕТРОКОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 18-мӗшӗнче, 22 сехет те 30 минутра хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ иккӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ПИОТРКУВ хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ПИОТРКУВ хулине ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 18-мӗшӗ.
№ 227.

ВИҪЕПЕ ТАРАСА СЛУЖБИ 100 ҪУЛ ТУЛТАРАТЬ

Январӗн 13-мӗшӗнче Российӑра виҫепе тараса службине организациленӗренпе 100 ҫул тултарать. 1845 ҫулта Петербургра кӑмартуллӑ виҫесемпе тарасасен депоне туса хунӑ. Каярахпа унтан, вырӑссен аслӑ ученайӗ Д. И. Менделеев хутшӑннипе, Главнӑй палата туса хунӑ. Ҫак палата виҫесемпе тарасасене упранӑ ҫеҫ мар, вӑл виҫесемпе тӗрӗс усӑ курассине государство енчен пӑхса тӑракан организаци пулса тӑнӑ тата наукӑпа тӗпчев ӗҫӗсене нуҫарса пынӑ.

1928 ҫулта Ленинградра Главнӑй палата никӗсӗ ҫинче Пӗтӗм Союзри Метрологии наукӑпа тӗпчев институтне туса хунӑ. Ҫав институт виҫессипе контролӗссин ҫӗнӗ меслечӗсене тупас тӗлӗшпе ӗҫлет. Совет Союзӗнче халӗ виҫе ӗҫне пӑхса тӑракан учрежденисем йышланса кайнӑ. Вӗсен шучӗ 230 ҫитет. Ҫав организацисене СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Виҫепе виҫекен приборсен Пӗтӗм Союзри комитечӗ пердештерсе тӑрать.

Ҫӗр ҫулхи юбилей тӗлне тӗрлӗ сборниксем кӑларасҫӗ, наукӑллӑ статьясем пичетлесҫӗ тата Мускавра юбилей ячӗпе выставка уҫаҫҫӗ. (ТАСС).

ҪАПАҪУ ВЫРӐНЕНЧЕ УҪНА ОБЕЛИСК

Ленинградра, асфальтлӑ шоссе Петродворецпа Красное Селона юплеисе каякан вырӑнта, хулана хӳтӗлекенсен ячӗпе памятник—обелиск уҫнӑ. Ҫакӑнта ӗнте 1941 ҫулта тӑшмана чарса лартнӑ. Ҫулталӑк каярах ҫеҫ кунта фронт цулнӑ.

Пустава ерипен илнӗ хыҫҫӑн гранитпа мрамортан тунӑ 5 метр тӑршшӗ обелиск курӑнса каять. Постаментӑн пичӗ енӗнче мрамор доски ҫине ҫапла ҫырса хунӑ:

«Ленин хулине паттӑррӑн хӳтӗлекенсене» Обелиск патӗнче чаплӑ митинг пулса иртнӗ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 17-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем январĕн 14-мĕшĕнче НАРЕВ шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи икĕ плацдармран, ВАРШАВАРАН çурçĕртерехре, наступлени пуçласа янă, артиллери хăватлăн персе тăрса пулăшнипе, тăшманăн вăйлă та шалалла кайнă çе каякан оборонине татнă.

Тăвату кун хушши пынă çапăçусенче, нимĕçсем хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, икĕ плацдармран наступлени туса пыракан фронт çарĕсем пĕрлешнĕ те 40 километр таран малалла кайнă, татса кĕнĕ вырăна 100 километр таран сарнă.

Наступлени туса пырса, пирĕн çарсем нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—МАКУВ, ПУЛТУССК, ЦЕХАНУВ, НОВЕ-МЯСТО, НАСЕЛЬСК хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 500 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ГЛАЖЕВО, ДЫЛЕВО, РАВЫ, ЗАВАДЫДВОРСКЕ, ОБЛУДЗИН, КОЗИН, ЗЕЛЕНА, ЧЕРНИЦЕ, БЕНКИ, ГОНСОЦИН, ШАВИН, АНДЗИН, ГОЛАВИЦЕ, ПОМЕХУВЕК ятлă пысăк ялсем тата НАСЕЛЬСК, СВЕРЧЕ, ГОНСОЦИН чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ВАРШАВАРАН хĕвеланăçнелле çав тери хăвăрт иртсе кайса, ЖИРАРДУВ хулине йышăннă, СОХАЧЕВ хулине каякан çулсене татнă, ВАРШАВАРАН çурçĕртерехре ВИСЛА шывĕ урлă каçнă, çапла ВАРШАВАНА хĕвеланăç енчен татса илсе, январĕн 17-мĕшĕнче пĕр харăс çурçĕр енчен, хĕвеланăç енчен тата кăнтăр енчен пырса çапнă та пирĕнпе союзлă Польша столицине ВАРШАВА хулине—нимĕçсен ВИСЛА шывĕ çинчи оборонин чи паха стратегиллĕ узелне—туртса илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. ГУРА, КАЛЬВАРИЯ, ТАРЧИН, БЯЛА-РАВСКА, НОВЕ-МЯСТО, ШИДЛОВЕЦ хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 800 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—МАЛА ВЕСЬ, ДОМБРОВА НОВА, ТРУСКУВ, ЛЕШНО, ХОЙНАТА, БАБСК, ДОМАНЕВИЦЕ, ЛЕНГОНИЦЕ, ПОТВОРУВ, ЯНИКУВ, СКШИННО, ПОЛИТУВ, СМАГУВ, ПАВЛУВ ятлă пысăк ялсем тата ХЫНУВ, ЧАХУВЕК, ЗЛОТОКЛОС, ПАРЧИН, ЯСЕНЕЦ, МОГЕЛЬНИЦА, НОВЕ-МЯСТО, РОЖКИ, ЯСТШОМБ, ШИДЛОВЕЦ чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, январĕн 17-мĕшĕнче çулсен паха узелĕсем тата нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсем пулса тăракан ПШЕДБУЖ тата РАДОМСКО хулисене туртса илнĕ, унтан, ВАРТА шывĕ урлă каçса кайса, танковăй соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт пырса çапнипе, нимĕçсен ВАРТА шывĕ çинчи оборонин паха узелне ЧЕНСТОХОВА хулине йышăннă. Малалла наступлени туса пырса, фронт çарĕсем январĕн 17-мĕшĕнче тата ВЕЖБНИК, РАДОШИЦЕ, КОНЬСКЕ хулисене туртса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти 70 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ЛЮБЕНЕ, БОДЗЕНТЫН, ЗАГНАНЬСК, МИЮВ, СЛУПЕ, ОЛЕШНО, СТОБЕЦКО-МЕЙСКЕ, ПЛАВНО, КОНАРЫ, МИХАЛУВ, ПШУРУВ, МОКШЕШ, ЯНУВ, НЕГОВО, ПРАДЛАЩИЦЕ, СЛАВНЮВ, ЛОБЗУВ, ИВАНОВИЦЕ, САДОВЕ, ПРОНОВИЦЕ, ВСЕНЖНИЦЕ, ГРЕНБОШУВ, ВОЛЯ-ЖЕНДЖИНЬСКА, ЛЕНКИ-ГУРНЯ ятлă пысăк ялсем тата КУНУВ-МЯСТО, КУНУВ, МИХАЛУВ, ГОЛЕНЕВЫ, ЗАГНАНЬСК, КЛОМНИЦЕ, ЗЛОТЫ ПЛОТОК, ПРОШОВИЦЕ, ЧАРНА чугун çул станцийĕсем.

БУДАПЕШТ хулинче пирĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă, 50 квартал йышăннă. Январĕн 16-мĕшĕнче БУДАПЕШТ хулинче нимĕçсемпе венгерсен 7.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 16-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 145 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 163 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсем, артиллери хăватлăн персе хатĕрленĕ хыççăн, Нарев шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи икĕ плацдармран Варшаварăн çурçĕртерехре наступлени пуçласа янă. Тăшманăн ку районри оборони нумай вăхăтлăха тунă укрепленисенчен, инженери сооруженийĕсемпе траншейăсенчен тăнă. Траншейăсенче дзотсемпе дотсем нумай пулнă. Артиллери вучĕн хумĕ хыççăн пирĕн штурмлакан батальонсем тăшманăн малти чаçĕсене атакăланă, гитлеровецсен траншейисене вăркăнса кĕрсе кайнă. Унтан вара атакăна пирĕн тĕп вăйсем кĕрсе кайнă, нимĕçсен оборонин пĕрремĕш линине татнă. Тăшман, контратакăсем пуçласа ярса, çапăçăва хăйĕн резервĕсене кĕртсе янă, анчах та нимĕçсем хăйсен укреплениĕсенче тытăнса тăма хăтланни пĕтсе ларнă. Нимĕçсем хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата вĕсен контратакисене сире-сире ярса, пирĕн çарсем тăшман оборонин иккĕмĕш линине, унтан тата виççĕмĕш линине татнă. Çапла вара, нимĕçсен оборонине урлă каçса çĕмĕрсе тăкнă. Наступление вăйлатса пырса, совет пехотинецĕсем тата танкистсемпе артиллеристсем Макув, Пултусск, Цеханув, Нове-Място хулисене тытса илнĕ. Икĕ кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн гитлеровецсене Насельск хулинчен те хăваласа кăларнă. Çапла вара, пирĕн çарсем Модлин хулипе крепоçĕнчен Хĕвелтухăç Пруссие каякан чугун çула пысăк участокра татнă. Тăшман хыпалансах эсэсовецсен «Аслă Германи» ятлă танковăй дивизине, 7-мĕш танковăй дивизине, çавăн пекех тата ытти пехотнăй чаçĕсене, штурмлакан тупăсен дивизионĕсене чылай илсе пырса, çапăçăва кĕртсе янă. Тăшманăн хаяр контратакисене сире-сире ярса, пирĕн çарсем тăвату кун хушшинче 40 километр таран малалла кайнă, халăх пурăнакан 500 пункта ытла йышăннă. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсем çынсем тĕлĕшпе питĕ пысăк çухатусем тӳсеçĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, наступленин малтанхи икĕ кунĕнче кăна пирĕн чаçсем нимĕçсен 114 танкне, тĕрлĕ калибрлă 376 тупăпине, 200 миномечне ытла тата темиçе çĕр пулеметне тытса илнĕ е пĕтерсе тăкнă. Тыткăна нумай илнĕ.

* * *

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсем, çав тери хăвăрт наступлени туса пырса, Польша столицине—Варшава хулине туртса илнĕ. Нимĕçсем хăйсен Висла шывĕ сулахай енчи оборонине нумай вăхăт хушши çирĕплетсе лайăхлатнă. Варшава хули тăшманăн çавăнти оборонин чи паха стратегиллĕ узелĕ пулнă. Пирĕн çарсем Варшаварăн хĕвеланăçнелле çав тери хăвăрт иртсе кайнă та Варшавăпа Ченстохова хулисем хушшинчи чугун çул çинче ларакан Жирардув хулине вăркăнса кĕрсе кайнă, кĕске çапăçу хыççăн Жирардув хулине туртса илнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн çарсем Хĕвеланăç Буг шывĕпе Висла шывĕ хушшинчи вырăна тăшмантан тасатнă, унтан Висла шывĕ урлă каçса кайнă та Висла шывĕн сулахай хĕрринче плацдарм йышăннă. Паян совет çарĕсем поляксен 1-мĕш армийĕн чаçĕсемпе пĕрле тĕрлĕ енчен пырса, Варшава урамĕсене вăркăнса кĕрсе кайнă. Пĕр вăхăтрах çурçĕр енчен, хĕвеланăç енчен тата кăнтăр енчен пырса çапса, Польша столицине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă.

Наступлени туса пырса, фронт çарĕсем малалла куçса пынă. Советсен çăмăллăн куçса çӳрекен чаçĕсем тăшман тылĕсене кĕре-кĕре каяççĕ, хирĕç тăмалли узелсене пусара-пусара лартаççĕ, тăшманăн çулĕсене тата çапăçу хирне пыракан резервĕсене çĕмĕреççĕ. Кун каçиччен пирĕн чаçсем хуласем чылай туртса илнĕ тата халăх пурăнакан 800 пункта ытла йышăннă. Унти çапăçусенче тăшман çав тери йывăр çухатусем тӳсет. Пĕр районра пĕр соединени боецĕсем нимĕçсен 73-мĕш пехотнăй дивизине пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă. Çав дивизи çапăçнă районра çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 2.000 виллине ытла шутласа кăларнă. 73-мĕш дивизирен чĕррĕн тăрса юлнă 600 çынна тыткăна илнĕ. Малтанлăха палăртнă тăрăх, пирĕн çарсем кун каçиччен нимĕçсенчен 25 танк 122 тупă, 211 миномет, 378 пулемет тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлă наступление вăйлатса пынă. Енер Пилица шывĕ урлă каçса кайнă пирĕн чаçсем çав тери хăвăрт малалла куçса пынă. Нимĕçсем юлашки вăйĕсене хурса хирĕç тăнă, вĕсем совет çарĕсен наступленине чарма хăтланнă, малтанах хатĕрлесе хунă позицийĕсенче çирĕпленсе тăма тăрăшнă. Пирĕн çарсем тăшмана ывăтса янă та, хыççăнах хăваласа пырса, пĕр чарăнса тăмасăр, Радомско хулине туртса илнĕ. Тăшманпа çапăçса, Варта шывĕ урлă Радомско хулинчен кăнтăртарахра каçса кайнă та, совет танкисчĕсемпе пехотинецĕсем Ченстохова хули патнелле ыткăннă. Хулана хĕвелтухăç енчен пырса кĕмелли çула тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборона позицийĕсем картласа ларнă. Ченстохова хулинчен 12 километр хĕвелтухăçнерехре нимĕçсем танксене чармалли хатĕрсем туса тултарнă, сарлака та тарăн канав чавса тухнă. Хăюллă маневр туса, пирĕн чаçсем хулана çурçĕртен çавăрса илнĕ те хула хĕррине вăркăнса кĕрсе кайнă. Тăшман вырăссем хулана çурçĕр енчен пырса çапасса пăчах та кĕтмен. Хаяррăн çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем Ченстохова хулине туртса илнĕ. Ченстохова хули Кăнтăр-хĕвеланăç Польшăри пысăк промышленность центрĕ тата чугун çулсен паха узелĕ пулса тăрать. Ченстохова хулинче пирĕн çарсем трофейсем нумай тытса илнĕ, вăл шутра нимĕç çарĕсен склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Балтика тинĕсĕн кăнтăр пайĕнче нимĕçсен пĕтĕмĕшпе 7.000 тонна таякан икĕ транспортне шыва путарнă.

Н. М. Шверник Англи парламенчĕн делегацине йышăнни

Январĕн 16-мĕшĕнче Национальноçсен Совечĕн Председателĕ Н. М. Шверник юлташ Англи парламенчĕн членĕсен делегацине йышăннă. Делегацие çаксем кĕреççĕ: Вальтер Эллиот (делегаци пуçлăхĕ), Чарльз Понсонби, Маннингэм Балдер, лорд Ловат, Джон Паркер, Томас Фрезер, лорд Фарингдон, Уилфред Робертс, П. В. Джоусон тата Стефан Кинг-Хол господинсем.

Эллиот господин Н. М. Шверник юлташа Общинăсен палатин тата Лордсен палатин СССР Верховный Совет Президиумĕ ячĕпе сырнă саламлă çырăвĕсене панă.

Йышăнура Великобританин СССР-ти Еçĕсен Повереннăйĕ Д. Бальфур господин пулнă.

А. А. Андреев юлташ Англи парламенчĕн делегацине йышăнни

Январĕн 16-мĕшĕнче Союз Совечĕн Председателĕ А. А. Андреев юлташ Англи парламенчĕн членĕсен делегацине йышăннă. Делегацие çаксем кĕреççĕ: Вальтер Эллиот (делегаци пуçлăхĕ), Чарльз Понсонби, Маннингэм Балдер, лорд Ловат, Джон Паркер, Томас Фрезер, лорд Фарингдон, Уилфред Робертс, П. В. Джоусон тата Стефан Кинг-Хол господинсем.

Йышăнура Великобританин СССР-ти Еçĕсен Поверенннăйĕ Д. Бальфур господин пулнă.

Франципе Совет профсоюзĕсен комитечĕ çинчен

Пĕтĕм Союзри Профсоюзсен Центральнăй Совечĕн Президиумĕ Франции Пĕтĕмĕшлĕ Еç Конфедерацийĕ Франципе Совет профсоюзĕсен комитетне тума сĕннине йышăннă. Франципе Совет профсоюзĕсен комитетĕнче ĕçлекен совет делегацине çак юлташсене кĕртнĕ: В. В. Кузнецов — ВЦСПС председателĕ (делегаци пуçлăхĕ), Л. Н. Соловьев—ВЦСПС секретарĕ, В. С. Цветков—Пир-авăр промышленность рабочийĕсен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕн Председателĕ, В. Я. Карягин—Центрти чугун çулсен рабочийĕсен профсоюзĕн Центральный Комитечĕн Председателĕ, Н. П. Филатов—Хĕвелтухăç районĕсенчи çĕркăмрăк промышленноçĕн рабочийĕсен профсоюзĕн Центральный Комитечĕн Председателĕ, И. Н. Жмыхов — ВЦСПС-ăн Ютçĕршыв Еçĕсен Отделĕн Заведующийĕн заместителĕ (делегаци секретарĕ).

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ предприятисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Котов юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода иккĕмĕш премии. Слуцкий юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода виççĕмĕш премии памалла тунă.

ЧУГУН ÇУЛ ВАЛЛИ ВУТА ХАТĔРЛЕСЕ ТУРТТАРМАЛЛИ IV-МĔШ КВАРТАЛТИ ПЛАНА ДЕКАБРĔН 15-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем тата вăрман хатĕрлекен организацисем	Плана тултарнă (процентпа): Туртта рас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăн йышăнать: Туртта рас енĕпе	Мĕнле вырăн йышăнать: Хатĕрлес енĕпе
Сĕнтĕрвăрри	100.7	98.1	1	1
Первомайски	91.3	76.6	2	4
Куславкка	88.5	83.3	3	3
Чурачăк	84.2	69.5	4	7
Комсомольски	80.9	48.6	5	19
Сĕмĕрле	72.2	90.2	6	2
Канаш	71.1	51.6	7	16
Октябрьски	66.5	67.6	8	8
Шăхасан	65.6	57.3	9	12
Вăрмар	64.9	41.4	10	25
Муркаш	60.7	54.7	11	14
Иşлей	60.6	45.1	12	22
Йĕпреç	60.0	55.2	13	13
Чкаловски	59.9	74.7	14	5
Советски	59.0	53.1	15	15
Шупашкар	57.6	60.5	16	11
Хĕрлĕ Чутай	54.6	60.5	17	10
Елчĕк	54.6	48.1	18	20
Калинино	51.2	70.7	19	6
Вăрнар	48.6	50.6	20	17
Етĕрне	47.6	45.4	21	21
Элĕк	45.2	35.7	22	26
Çерпӳ	44.5	42.3	23	24
Кувакино	42.7	64.2	24	9
Красноармейски	42.5	50.0	25	18
Сĕнтĕр	42.4	34.5	26	27
Тăвай	40.1	43.7	27	23
* * *				
Улатăр вăрман хуçалăхĕ	104.0	96.8	1	1
Кире вăрман хуçалăхĕ	84.3	65.4	2	4
Йĕпреç вăрман хуçалăхĕ	84.2	69.6	3	3
Кире вăрман пункчĕ	83.3	75.1	4	2
Алтышево вăрман промхозĕ	74.0	53.6	5	8
Вăрнар вăрман хуçалăхĕ	65.4	57.3	6	7
Канаш вăрман промхозĕ	65.1	44.2	7	14
Сĕмĕрле вăрман хуçалăхĕ	69.9	54.9	8	9
Хĕрлĕ Чутай вăрман пункчĕ	52.5	50.9	9	12
Йĕпреç вăрман промхозĕ	52.3	51.2	10	11
Буински вăрман промхозĕ	51.0	52.4	11	10
Вăрнар вăрман промхозĕ	50.6	63.5	12	5
Сĕмĕрле вăрман пункчĕ	49.9	46.6	13	13
Йĕпреç участокĕ	49.5	60.5	14	6

Комсомолăн районри организацийĕн конференцийĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). Çак кунсенче кунта комсомолĕн районри организацийĕн отчетпа суйлав конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференци ВЛКСМ райком секретарĕн Скворцов юлташăн отчетне итлерĕ.

Конференци ĕçне ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем Григорьев, Гладков, Герасимов, ВЛКСМ Чăваш обкомĕн секретарĕ Бочков юлташсем хутшăнчĕç.

Комсомолăн районри организацийĕ отчетлă тапхăр хушшинче чылай ĕçсем туса ирттернĕ. 1944 çулта комсомолецсемпе çамрăксем Донбасс ачисене валли 80.000 тенкĕ укçа пухнă, оборона фондне 25.000 тенкĕ укçа хывнă. Государствăна тырă парас ĕçе те комсомолецсем активлăн хутшăннă. 285 комсомолец транспорт бригадисенче ырми-канми ĕçленĕ.

«Красный Порденер» колхозра комсомолецсем пуçарнипе кок-сагыз звени тунă. Çав звено комсомолка Раиса Петрова ертсе пынипе иртнĕ çулта кашни гектартан 20—26 центнер кок-сагыз тымарĕ туса илчĕ.

Анчах та комсомол организаци ĕçĕнче çитменлĕхсем те нумай-ха. Уйрăмăнах çамрăксене комсомол ретне явăçтарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Тăватă çул хушшинче пурĕ те 1083 çамрăка çеç комсомол ретне илнĕ. 33 колхозра халĕ те комсомол организацисем çук. Сахал йышлă организацисем 33 шутланаççĕ.

Конференци районри комитет ĕçне хытă критиклерĕ. Прениre пурĕ 22 çын тухса калаçрĕç. Вĕсем комсомолецсен политикăлла пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине, çарпа физкультура ĕçĕ начар пулса пынине, агитаципе пропаганда ĕçĕ, культмассăллă ĕç начар пулса пынине, шкул енĕпе ĕçлекен комисси начар ĕçленине критиклерĕç. Районра паянхи куна çитсе те колхоз çамрăкĕсен каçхи шкулĕсене уçман.

Конференци çитес çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе комсомолецсем çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ. Çак таранччен те районри колхозсенче комсомолецсемпе çамрăксен вăйлă тырпул звенисене туман.

Конференци комсомол умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пымалли мероприятисене палăртса хăварчĕ. ВЛКСМ райкомне ертсе пырас ĕçе политика тĕлĕшĕнчен малта пыракан пултарулă тата ĕçре палăрнă комсомолецсене суйласа хăварчĕ.

ВЛКСМ райкомĕн январĕн 14-мĕшĕнче пулса иртнĕ организациллĕ пленумĕ ВЛКСМ райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса ĕçлеме Скворцов юлташа, иккĕмĕш секретарь пулса ĕçлеме Ефимов юлташа суйларĕ.

С. ШАДИН

А. С. Грибоедов çуралнăранпа 150 çул тултарни

ССР Союзĕн Пысăк Театрĕнче пулса иртнĕ чаплă лару

Январĕн 15-мĕшĕнче столицăра А. С. Грибоедов çуралнăранпа 150 çул тултарнине чаплăн палăртса ирттернĕ. ССР Союзĕн Пысăк Театрне наука, искусство тата литература деятелĕсем, Хĕрлĕ Çарăн генералĕсемпе офицерĕсем, Мускаври предприятисенчи стахановецсем пухăннă. Залра дипломатиллĕ корпус членĕсем те пулнă.

Чечексемпе илемлетсе хунă ылттăн рамка хушшинче писатель-патриотăн портречĕ. Уçса хунă кĕнеке çинче Тăван çĕршыва чĕререн юратнине палăртакан çак сăмахсене çырса пулать: «Тăван сĕршыв тĕтĕмĕ те пирĕншĕн тутлă»

Грибоедов юбилейне ирттерме тунă Пĕтĕм Союзри Комитетăн Председателĕ Сталинла премии лауреачĕ Л. М. Леонов аслă вырăс писателĕн пурнăçĕпе творчестви çинчен доклад туса парать. Унăн докладне, писателĕн пурнăçĕпе творчествине витĕмлĕ примерсемпе кăтартса паракансклерне, Грибоедов образĕсене çивĕч характеристика паракансклерне, залра пулнисем тимлĕн итлесе ларнă.

Ларура çавăн пекех СССР-ти Наука академийĕн член-корреспонденчĕ Н. Пиксанов, Грузин поэчĕ Алио Машашвили тата СССР халăх артистки А. А. Яблочкина сăмах тухса каланă.

* * *

Чаплă лару хыççăн пысăк концерт пулнă. Вăл концерта искусствăн паллă мастерĕсем хутшăннă. Горький ячĕпе тăракан МХАТ артисчĕсем, Кĕçĕн театр артисчĕсем Ленинградри Пушкин ячĕпе тăракан драма театрĕн артисчĕсем тата Саратоври К. Маркс ячĕпе тăракан драма театрĕ артисчĕсем «Горе от ума» комедин уйрăм сценисене выляса панă. (ТАСС).

Промышленноçа—тимĕр-тăмă

ШАХАСАН. Районри комсомолецсемпе çамрăксем тата пионерсем промышленноçа валли тимĕр-тăмăр пухса параççĕ. Иртнĕ çулхи IV-мĕш кварталта 9.4 тонна пухса панă.

Çапла вара район тимĕр-тăмăр пухмалли иртнĕ кварталти плана 268 процент тултарнă.

А. АНТОНОВ

Люблин халăхĕ савăнать

Польша республикин премьер-министрĕ Осубка-Моравский тухса калани

ЛЮБЛИН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар Польша çарĕпе пĕрле Варшава хулине ирĕке кăларни çинчен радио пĕлтерсенех, Люблинра Литовски площадьре хăй тĕллĕнех митинг пуçланса кайнă. Вăл телейпе савăннине пĕлтерекен манифестаци пулнă. Çынсем хĕпĕртенипе макăрнă. Шкул ачисем митинга кайма пултарччăр тесе, шкулсенче вĕрентме чарăннă. Митинга çитĕç министрĕ Сшешевский пынă. Хăйĕн кĕске сăмахĕнче вăл кашни поляк хĕпĕртенине палăртнă. Хула çыннисем пĕрпĕрне тав тунă. Пур-çĕрте те çакăн пек сăмахсем илтме пулнă: Варшава каллех ирĕкре! Варшава каллех пирĕн! Пирĕн столицăна ирĕке кăларакан паттăр Хĕрлĕ Çарпа Польша çарĕсене чыс та мухтав!

ЛЮБЛИН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Варшава, Кельце, Радом тата Польшăн ытти хулисене ирĕке кăларнă май Польшăн Вăхăтлăх Правительствин премьер-министрĕ Осубка-Моравский радиопа сăмах каланă: «Поляксем çав тери савăннине палăртма, пире ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çарпа унăн генийлĕ çулпуçне Сталин Маршала мĕн тери чĕререн тав тунине каласа пама сăмах та çитерейрес çук. Тăванла совет халăхĕсем тата унăн паттăр Хĕрлĕ Çарĕ пулăшнипе пирĕн çĕршыва каллех ирĕклĕх тавăрса панă. Çакна Польша халăхĕ ĕмĕр-ĕмĕрех асра тытĕ, çавна ответлесе, вăл вырăс халăхĕпе чунтан-чĕререн туслăн пурăнма тăрăшĕ».

Малалла Осубка-Моравский Польша столицине ирĕке кăларас ĕçе Польша çарĕн салтакĕсем те хутшăннине, вĕсем хăйсен паттăрлăхне кăтартнине паллă туса, Польшăн ирĕке кăларнă районĕсенчи халăха, вăл шутра Варшава хулинче пурăнакансене, халех пулăшу пама кирли çинчен каланă. Пирĕн халăхшăн «пысăк савăнăçлă кунсенче,—тенĕ юлашкинчен Осубка-Моравский,—нациллĕ пĕрлĕхе пирĕн пур майсемпе те çирĕплетмелле, демократиллĕ государство пурнăçне чĕртсе ярассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле. Пирĕн фабрикĕсемпе заводсене, шкулсемпе учрежденисене çĕнĕрен юсаса ĕçе ямалла. Хамăр çĕршыва ирĕке кăларас ĕçе тата ытларах хутшăнас шутпа пирĕн хамăрăн Польша çарне пулăшассине вăйлатмалла».

«ФРАНЦИ—СССР» ЯТЛА АССОЦИАЦИ СЪЕЗЧЕ

ПАРИЖ, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 13-мĕшĕнче Парижра «Франци—СССР» ятлă ассоциацин пĕрремĕш съезчĕ уçăлнă. Съезда 320 делегат пынă. Съезда ассоциаци председателĕ Фернан Гренье уçнă. Пĕрремĕш ларура съезд ассоциаци ĕçĕсен планне сӳтсе-явнă.

„Франци—СССР" ятлă ассоциаци съезчĕн юлашки ларăвĕ

ПАРИЖ, январĕн 15-мĕшĕ (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер «Франци—СССР» ятлă ассоциацин пĕтĕм Францири съезчĕн юлашки ларăвĕ пулса иртнĕ. Çав ларура союзлă çĕршывсен посольствисен представителĕсем тата общество деятелĕсем пулнă. Ларура тухса каланă ораторсем Франципе СССР хушшинчи культурăллă çыхăнусем çинче чарăнса тăнă, икĕ çĕршыв хушшинчи çыхăнăва çирĕплетме кирлине палăртса хăварнă.

Съездра ассоциаци комитетне суйласа лартнă. Вăл комитета министр пулнă çынсем, Марсель Кашен сенатор, Жан Ришар Блок писатель тата ыттисем те кĕнĕ.

РУМЫНИРЕ ВЫРĂС ЛИТЕРАТУРИПЕ ИНТЕРЕСЛЕНЕÇÇĔ

БУХАРЕСТ, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Вырăс кĕнеки» магазинĕ ĕçлеме пуçласан пĕрремĕш кунах Румынире вырăс литературипе питĕ интересленни палăрнă. Иртен пуçласа каçченех магазинта халăх тулнă. Вырăс классикĕсен тата паллă совет писателĕсен кĕнекисене пĕрремĕш кунах илсе пĕтерне. Совет литературин произведенийĕсене сутăн илме магазина Румынири 30 пысăк хуларан делегатсем пырса çитнĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, Ставло—Мальмеди секторĕнче (Бельги) Арден савăлĕн çурçĕр флангĕнче союзниксен çарĕсем Мальмедирен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри Файмонвиль районĕ таранах атакăланă, Линцевиле йышăнса илнĕ. Ку районта хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман пехотипе танкĕсен йышлă контратакисене сире-сире пăрахнă. Унтан кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Вильсальмран 4 миля кăнтăртарахра Бовинье хĕрринче çапăçаççĕ. Кунтан кăнтăртарахра союзниксем Бовиньипе Шерен хушшинчи çул çинчи хăйсен позицийĕсене çирĕплетнĕ. Бастоньрен çурçĕртерехре союзниксем Бетоньпе Компонь хушшинчи çулпа çурçĕрелле куçнă. Компоньрен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, тăшман пехотипе танкĕсем вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пырса, союзниксем çурçĕр еннелле 1,5 миля кайнă. Бастоньрен кăнтăртарахра союзниксен бронетанковăй отрячĕсем, тăшман çав тери вăйлă хирĕç тăрса кĕрешнине сирсе пăрахса, Варден патнелле ерипен куçса пыраççĕ.

Люксембургри Ремихран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем нимĕçсен Ненниг хулине йышăннă.

Гаттенра (Эльзас) хаяр çапăçусем пыраççĕ. Артиллерипе танксем пулăшнипе, тăшман атака хыççăн атака тăвать.

Наступлени тума пуçланăранпа икĕ эрне хушшинче Эльзаспа Лотарингире тăшманăн 10.000 çын ытла вилнĕ тата аманнă, 4.000 çынна тыткăна илнĕ. Тăшманăн 100 танкне пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне, Эльзас тӳремĕн вăтам пайĕнче те тăшманăн çухатусем пулнă.

Союзниксен авиацийĕ çапăçу районĕнче активлăн кĕрешнĕ.

600 йывăр бомбардировщик ытла, 675 истребитель хӳтĕлесе пынипе, Рейтлингенри, Аугсбургри тата Ингольштадтри (Германи) чугун çул деповĕсене тапăннă. Йывăр бомбардировщиксен тепĕр соединенийĕ истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Бохум тата Реклингхаузен çывăхĕнчи (Германи) бензол завочĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраш енчи кĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтернинче каланă тăрăх, тарăн юр тата тавраллă япăх курăнни Итали фронтĕнче çапăçу ĕçне чăрмантарнă.

ЛОНДОН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре каланă тăрăх, союзниксен çарĕсем Кăнтăр Голландире, Голландипе Германи чикки çывăхĕнче, Ситтардран çурçĕртерехри районра наступлени пуçласа янă.

Арден савăлĕн районĕнче Мальмедирен кăнтăртарахра йывăр çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен çарĕсем тăшмантан Файмонвиле тасатнă, Мальмедирен кăнтăртарахри Онденвале тытса илнĕ. Бовиньи хули хĕрринче хаяр çапăçусем пынă. Бовиньипе Уффализран кăнтăртарахра ларакан Шерен хулине союзниксем йышăннă. Савăлăн çурçĕр тата кăнтăр флангĕнчен наступлени туса пыракан союзниксен чаçĕсем Уффализра тата унтан икĕ миля хĕвеланăçнерехре ларакан пĕр пунктра пĕрлешнĕ. Бастоньрен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра тăватă хула тытса илнĕ.

Гаттенра хаяр çапăçусем пулнă хыççăн союзниксем хулан тăватă пайĕнчен виççĕ пайне йышăннă. Тăшманăн Рейн хĕрринчи укреплениййĕнче те пĕр миля таран малалла кайнă. Эльзас-Лотарингире пулса иртнĕ çапăçусем вăхăтĕнче нимĕçсен 17-мĕш гренадерски танковăй дивизийĕн командирне тыткăна илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ çĕр çинче çапăçакан çарсене пулăшса пынă тата тăшманăн Германири объекчĕсене тапăннă. 600 йывăр бомбардировщик, 650 истребитель хӳтĕлесе пынипе, январĕн 16-мĕшĕнче тата январĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германири промышленность центрĕсене—Дрездене, Магдебурга тата ыттисене те тапăннă.

ЛОНДОН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраш енчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, Италире 5-мĕшпе 8-мĕш армисен участокĕсенче патрульсем активлăн çапăçнă.

Грецири лару-тăру

ЛОНДОН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радион Афины хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ЭЛАС чаçĕсем, перемири условийĕсем тăрăх, хăйсем йышăннă районсенчен чакса пыраççĕ. Енер лăпкă пулнă, нимĕнле хирĕçӳ те пулман.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци премьер-министрĕ Пластирас генерал «Имериссиа Неа» корреспондентне амнисти пулмасть, тесе пĕлтернĕ. Анчах та «çĕршыва лăпкăлантарас шутпа: «пăлхавçăсем» майлă (ЭЛАС чаçĕсем майлă) кĕрешнисене каçарас политика йышăнмалла пулать». Пластирас çапла хушса каланă: пăлхава ертсе пыракансене хытă айăпламалла пулать, тенĕ.

ГРЕЦИ ПРЕМЬЕР-МИНИСТРНЕ ПЛАСТИРАСА РУЗВЕЛЬТ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 15-мĕшĕнче Рузвельт президент Грецин премьер-министрне Пластираса çыру янă. Çак çыру Пластирас Рузвельта янă çыру çине ответлени пулать.

Грецире юлашки вăхăтра пулса иртнĕ юнлă çапăçу пирки Америка халăхĕ те, Рузвельт хăй те питĕ шеллени çинчен каланă. Малалла Рузвельт çапла каланă: Пластирас нумаях пулмасть каланă тăрăх, çапăçусем чарăннă хыççăн унта хутшăннă çынсене хĕсме тытăнмĕç, çакă вара граждан вăрçи патне илсе пынă тавлашуллă ыйтусене çывăх вăхăтра демократиллĕ ирĕклĕ меслетсемпе татса пама май парĕ тесе шанатăп тенĕ. Рузвельт çырура малалла Грецие ура çине тăратас тĕлĕшпе США правительстви тата унăн союзникĕсем мĕн тума май пуррине пĕтĕмпех тума пулни çинчен каланă.

ОБЩИНАСЕН ПАЛАТИНЧЕ ПАНĂ ЫЙТУСЕМ ÇИНЕ ЧЕРЧИЛЛЬ ОТВЕТЛЕНИ

ЛОНДОН, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатинче. Рис Девис панă ыйту çине ответлесе, Черчилль çапла каланă: пăрçă тăшман пĕр сăмахсăр парăнниччен пырĕ, тенĕ.

ЛОНДОН, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатинче Черчилль çапла каланă: декабрĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 6-мĕшне çитиччен (чи юлашки даннăйсем) Грецире Англи çарĕсем 2.101 çын çухатнă, вĕсенчен 337 çын вилнĕ.

Черчилле Грецире суйлавсемпе плебисцит ирттересси çинчен ыйту панă. Черчилль палата членĕсене тăхтама ыйтнă, çывăхри вăхăтрах ку ыйту пирки правительство ячĕпе каласа пама пулнă.

Ăна хирĕçлесе, Шинуэлл лейборист çапла каланă «Халех татса памалли ыйтусем пулнă пирки премьер-министртан эпĕ çакăн çинчен ыйтма пултарăп-ши? Пластирас генерал хăйĕн правительстви Грецие ЭЛАС çарĕсенчен тасатма пулни çинчен каланине премьер-министр асăрханă-и? Англи правительстви Пластирас генералăн çав политикине пурнăçлас ĕçре пулăшать-и тата çак тĕлĕшпе Англи хĕçпăшалĕпе усă курма юрать-и?»—тенĕ.

Черчилль çапла каланă: «Ытти ыйтусем çине ответлесе, эпĕ халь çеç çапла каларăм: вăл ыйтусене тивĕçлипе сӳтсе-явма май киличчен тăхтама ыйтатăп, терĕм».

Корреспондентсем ЭЛАС членĕсемпе калаçма пултараймаççĕ текен инструкцие кам хушнипе кăларнă?—тесе ыйтнă Дагдейл лейборист.

Черчилль çапла каланă: делегатсем фронт линийĕ урлă каçнă хыççăн вĕсене главнокомандующи хурал аллине панă. «Çавăнпа та,—тенĕ вăл малалла,—вăл делегатсене главнокомандующисĕр пуçне та, та унăн полномочнăй представителĕсемсĕр пуçне никам та курмалла мар туни тĕрĕс пулать. Хăйсен çарĕсем патне каялла таврăнниччен вĕсене хуралласа усраççĕ. Çапăçусем пынă вăхăтра ЭЛАС йышăннă территорие кĕни лайăх мар пулнă пулĕччĕ. Çăнахах та, пĕтĕм тĕнчери Хĕрлĕ Хĕрес организацин представителĕсене кăна çавăн пек ирĕк панă».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ... — 9—07, ... секретарĕн — 4—20, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00010 Типография № 1. Управления полиграфпро... при СНК ЧАССР. Заказ № ... Тираж 10.000 экз.